27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ЯНВАРЬ 6 ШАМАТКУН 3(6754) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварассишĕн!

Колхозри выльăх-чĕрлĕх шучĕ яланах ÿссе пытăр тесен, çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илни тата вĕсене пĕтĕмпех пăхса çитĕнтерни кирлĕ. Хĕллехи вăхăт — выльăх ĕрчетес ĕçре калама çук ответлă вăхăт пулса тăрать. Çамрăк выльăхсем пуринчен ытларах январь—февраль уйăхĕсенче çуралаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малта пыракан колхозсем кашни тихана, пăрува, путеке, сысна çурине тĕрĕс-тĕкĕл пăхса усрама тăрăшаççĕ. Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозри конюх Н. Пайманов 39 кĕсререн 34 тиха илнĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса ÿстернĕ. Çак колхозра халиччен çамрăк выльăхсем вилнине пĕлмеççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красный Остров» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе кăтартуллăн ĕçлет. Çак районри нумай колхозсемшĕн вăл паха тĕслĕх кăтартса парать. «Красный Остров» колхозри ферма заведующийĕ Почейкина хăйне шанса панă ĕçе лайăх тунине пула, иртнĕ çул кунта планран ирттерсе 112 путек çитĕнтернĕ. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри пăрусене пăхакан К. Григорьева фермăра 11 çул ĕçлет. Иртнĕ çул Григорьева юлташ 32 пăру илнĕ, вĕсене пĕтĕмпех пăхса çитĕнтернĕ. Лайăх пăхнине пула, пăрусем талăкра 522-шер грамм ÿссе пынă. Пăрусем усрамалли вите ăшă, тирпе, çутă тата, яланах таса. Пăрусене сĕт паракан савăт-сапана апатлантарас умĕн Григорьева юлташ вĕри шывпа чÿхесе çăвать. Пăрусем айне сарнă улăма кашни кун улăштарса тăрать.

Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз çулран-çулах выльăх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарать. Иртнĕ çул государство планне лашасем енĕпе 100 процент, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 137 процент, сурăхсем енĕпе 122 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 137 процент тултарнă. Кунта çамрăк выльăхсем вилнĕ тĕслĕхе астумаççĕ. Кашни кĕсре хăçан хăмламаллине, кашни ĕне хăçан пăруламаллине выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте ĕçлекенсем кăна мар, колхоза ертсе пыракансем те пĕлеççĕ.

Анчах та, тÿрех калас пулать, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлекен колхозсем те республикăра сахал мар. ВКП(б) Обкомĕн XX пленумĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме кирлине хыттăн асăрхаттарса хăварчĕ. Уйрăм колхозсен руководителĕсем кăна мар, хăшпĕр районсен руководителĕсем те сахалтан кирлĕ пек вывод туман. Акă, Чурачăк районĕнех илер. Кунта çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илес тата пурне те пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ: районри 78 колхозран 29 колхозра пăрусем усрамалли çуртăр çук, 2 колхозра сыснасене усрама вите çителĕксĕр, 14 колхозра сурăх витисем çук. 11 колхозра çак вăхăта çитсе те пăру витисене юсаса пĕтермен тата ăшăтман, 8 колхозра сысна витисене халĕ те юсаççĕ. «Камай» колхозра сысна çурисене усрама çуртăр çуккине пула 18 сысна çурине пусса çисе янă.

Выльăхсене усрамалли çуртăрсене лайăх юсаса хатĕрлеменнипе иртнĕ çул Чурачăк районĕнче тихасенчен 12,4 проценчĕ, пăрусенчен 21,5 проценчĕ, сысна çурисенчен 20,3 проценчĕ, путексенчен 27,3 проценчĕ вилсе пĕтнĕ. Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче кăна районĕпе 11 тиха, 28 пăру, 128 сысна çури тата 26 путек вилнĕ.

Анчах çакна кăçал та шута илмеççĕ. Чылай колхозсенче пĕтĕ выльăхсем валли уйрăм пÿлĕмсем хатĕрлемен. Пĕтĕ выльăхсене уйрăм çитермеççĕ. «Новая сила», «Победа», «Красный восток» колхозсенче выльăхсем патĕнче хурал тăмаççĕ, фермăра ĕçлекенсем çамрăк выльăхсене пăрулана хыççăн кĕтсе илес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Пĕтĕ выльăхсем хăçан пăруламаллине чылай колхозсенче пĕлмеççĕ. Выльăх апатне йÿçĕтсе, вакласа е пăтратса çитерессине организацилемен.

Паллах, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн Чурачăк районĕ пек кĕрешме юрамасть. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ăнăçлăха çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерни татса парать. Кашни колхозрах çамрăк выльăхсене пăрулана хыççăн пăхса усрама сутă, таса тата ăшă çуртăрсем пулмалла. Çамрăк выльăхсене усрамалли çуртăрсем колхозăн çитмеççĕ пулсан, ялти ытти пушă çуртсемпе усă курмалла. Уйрăмах пĕтĕ выльăхсене пăхас ĕçе лайăхлатмалла, вĕсене уйрăм пÿлĕмсенче усрамалла, апатне те лайăхрах çитермелле. Лаша витисенче, ферма çурчĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем яланах пулмалла, вĕсем кашни выльăх хăçан пăрула454маллине е хăмламаллине пĕлсе тăмалла.

Çамрăк выльăхсене çитерме колхозрачи лайăх апат уйăрмалла. Вăл апата мĕнле расходланине контроллесе тăрас пулать. Колхозри выльăх апатне вăрлакансемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешмелле. Выльăх валли уйăрнă апат пĕтĕмпех выльăха тăрантарнă çĕре кайтăр.

Çамрăк выльăх вилнĕ кашни тĕслĕхе правлени ларăвĕнче сÿтсе-явмалла, айăплă çынсене халăх сучĕ урлă ответ тыттармалла.

Çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес ĕçре ветеринарсемпе зоотехниксем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем колхозсенчи фермăсенче час-часах пулмалла, ферма работникĕсене ветеринарипе зоотехника правилисем çинчен тĕплĕн каласа памалла тата тĕрлĕ чир-чĕртен сыхланма вĕрентмелле. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене пурне те зоовет кружоксене явăçтармалла.

Колхозсенче çамрăк выльăхсене кĕтсе илес тата пăхса çитĕнтерес ĕç мĕнле тăни çинчен ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн ларăвĕсенче час-часах сÿтсе-явмалла. Колхозсенчи партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсем выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе лайăхлатма, кашни çамрăк выльăха сыхласа усрассишĕн кĕрешес ĕçе организацилеме, çак ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма тивĕçлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтăва çак ĕçе пĕлекен çынсем татса параççĕ. Опытлă конюхсене тата фермăра ĕçлекенсене сăлтавсăр ĕçрен кăлармалла мар. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарса пыракансем пулнине яланах асра тытмалла. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркене кашни колхозрах пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

Кашни конюх, фермăра ĕçлекен кашни колхозник е колхозница вăл колхозри ответлă та чыслă ĕçре пулнине ăнланса илмелле. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, Хĕрлĕ Çара выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ те хĕçпăшал пекех кирлĕ. Çавăнпа та кашни колхозрах çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илсе тата пăхса çитĕнтерсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешмелле.

Тăшман батальонне аркатса тăкни

ÇАПАÇУРИ ÇАР, январĕн 5-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Кăçхине тăхăр сехетре нимĕçсем пăшалсемпе, пулеметсемпе вăйлăн пеме тытăннă. Çав вăхăтрах тăшман пехотин батальонĕ пĕр сас-чĕвсĕр пирĕн позицисем патне пыма пуçланă. Тăшман, пулеметсемпе персе хÿтĕленипе, пирĕн позицисем патне вăрттăн пырса çитсе, вĕсене кĕтмен çĕртен атакăлама шутланă.

Тăшман вăйлăн персе тăнă пулин, те пирĕн наблюдательсем уйăх çутипе тăшман малалла куçнине асăрханă. Сывлăша ракета вĕçсе хăпарнă. Çав паллă тăрăх пулеметчиксем малтанах тĕллесе хунă рубежсене пеме тытăннă. Стрелковăй ротăсен командирĕсем—гварди старши лейтенанчĕ Афанасьев тата гварди старши лейтенанчĕ Исайкин тăшмана харăс персе ĕçе часах организациленĕ. Пехота персе нимĕçсене «никамăн мар» тăрăхра тытса чарнă. Тата тепĕр минутран унта пирĕн минăсем вĕçе пуçланă.

Сасартăк атакăлама май пулманнине курса, нимĕçсем хăйсем те пирĕн траншейăсене минометсемпе пеме пуçланă. Вĕсем пирĕн персе тăракан вырăнсене пусарса лартса, çĕнĕрен атакăна кайма шутланă курăнать. Анчах та вĕсем кая юлнă. Пирĕн артиллери ĕçле пуçланă. Тăшман батальонне вара аркатса тăкнă.

Майор М. БУЛКИН.

Мухтав орденĕн кавалерĕсен тупă расчечĕ

ÇАПАÇУРИ ÇАР, январĕн 5-мĕшĕ **(ТАСС спецкорĕ).** Красников сержантăн тупă расчетне хирĕç фашистсен пысăк ушкăнĕ контратака пуçласа янă, фашистсене хăй тĕллĕн çÿрекен тупă пулăшса пынă.

Красников расчечĕ çав тупа тĕллесе пеме пуçланă. Темиçе снаряд персе ярса, «фердинанда» çĕмĕрнĕ. Анчах тăшман пехоти çаплах малалла шунă.

Вара пирĕн артиллеристсем çав пехотăна пеме пуçланă. Боецсем хăйсен снарячĕсене гитлеровецсем хушшине тĕл ÿкернĕ. Темиçе вунă нимĕçĕн вилли пирĕн расчет позицийĕ умĕнче выртса юлнă.

Анчах тупă расчечĕ пур снарядсене те персе пĕтернĕ. Вара пирĕн боецсем винтовкăсем, автоматсем, гранатăсем илнĕ те, Красников сержант ертсе пынипе, фашистсемпе алă вĕççĕн çапăçма пуçланă. 60 гитлеровеца вĕлернĕ, темиçе çынна тыткăна илнĕ.

Çак чаплă ĕçшĕн пĕтĕм расчета — тупă командирне Красников сержанта, Гришин наводчика, Кажахмед Казыбаев замковăя, Якимов установщика, Расходчиков ящичнăя 3-мĕш степень Мухтав орденĕсемпе наградăланă.

УКРАИНĂРИ ХĔЛЛЕХИ КУРОРТСЕМ

Украинăра хĕллехи курортсем ĕçлеме пуçланă. Ворзельти курорта 75 çын пырса çитнĕ те ĕнтĕ. Пущеводицăра фронтовиксен çемьисен членĕсем валли туберкулез чирне сиватакан санатори уçăлнă, унта 100 çын вырнаçать. Одесса хулинче Лермонтов ячĕпе тăракан курорт, Черкассăра—Сосновкăри туберкулез санаторийĕ уçăлать.

(ТАСС).

Харпăрхăй перекетлесе хăварнă тырра— Хĕрлĕ Çар фондне

ÇĔРПÿ, январĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне районри колхозниксем харпăрхăй перекетлесе хăварнă тырăран Хĕрлĕ Çар фондне 4.029 пăт, колхозсен фондĕнчен 1037 пăт панă. Нумай колхозсем шайкка тыррине авансра парса хураççĕ. Колхозсенчен пĕлтерне тăрăх, 4,212 пăт шайкка тырри леçнĕ. «Коминтерн» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар фондне 1.200 пăт пама йышăннă, паянхи кун тĕлне 1.812 пăт панă.

Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 240 пăт тырă панă. «Коснария» колхоз членĕсем 150 пăт панă.

* * *

НУРАЧАК, январĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян районри колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра хатĕрлев пунктне леççе пĕтерчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен ĕçкунĕ тăрăх илнĕ тырăран 4.500 пăта яхăн панă. 58 колхозран пĕлтерне тăрăх, пурĕ районри колхозсемпе колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 9000 пăт ытла тырă панă.

Ф. АРТЕМЬЕВ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ТАВАЙ, январĕн 5-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетлесе пухнă тырăран Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра 2.000 пăт ытла хатĕрлев пунктне леçнĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетлесе хăварнă тырăран 4.103 пăт Хĕрлĕ Çар фондне пачĕç. «Партизан» колхоз членĕсем 350 пăт, «12 лет Октября» колхоз колхозникĕсем 480 пăт. «Труженик» колхоз членĕсем 250 пăт, «Янмурзино» колхоз членĕсем 360 пăт пама йышăнчĕç. Çак тырра вĕсем пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леççе панă.

* * *

ИШЛЕЙ, январĕн 5-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксен пуçарăвне ырласа, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă чылай параççĕ. Паянхи кун тĕлне колхозниксем хăйсен перекетлесе хăварнă тырăран Хĕрлĕ Çар фондне 3.000 пăт леçрĕç. Уйрăмăнах Кипечкасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче çак ĕç пысăк ăнăçлăхпа иртрĕ. «Красный танк» колхоз председателĕ Павлов, çак колхозăн ветсанитарĕ Романов, колхоз агрономĕ Смирнов юлташсем кашниех 5-шер пăт пачĕç. «Герой» колхозра Отечественнăй аслă вăрçă инвалидчĕ Степанов юлташ 3 пăт, «Родина» колхозра учитель Смирнов 3 пăт панă. «Герой» колхоз членĕ Пашина юлташ, Хĕрлĕ Çар фондне 3 пăт тырă парса çапла каланă:

— Манăн упăшка вăрçăра тăшмана хирĕç çапăçать. Манăн виçĕ çамрăк ача пур, çапла пулсан та эпĕ колхоз ĕçĕнчен юлман, колхозран ĕçкунĕ тăрăх чылай тырă илтĕм. Тăшмана çĕнтерсе, пирĕн упăшкасем, ывăлсем киле таврăнччăр тесеп, эпир Хĕрлĕ Çара пулăшмалла. Хĕрлĕ Çаршăн нимĕн те шеллес çук, мĕн кирлĕ, пурне те пама хатĕр.

И. ПЕТРОВ, Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшатпăр

КУСЛАВККА. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсене юсамалли плана тултарчĕ. 16 трактор юсанă, вĕсене государство комиссийĕ те йышăннă.

Мускав облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС коллективĕ тата Шăхасан МТС-ĕ тракторсене юсас ĕçре социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн пирĕн МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем МТС-ри мĕнпур тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле юсаса пĕтерме йышăнчĕç.

Районри колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшас шутпа плугсем валли тĕренсем хатĕрлетпĕр. «Правда» колхоза 35 тĕрен хатĕрлесе патăмăр, ытти колхозсем валли тата 100 тĕрен хатĕрленĕ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ, МТС директорĕ.

Тырă тухăçлăхне ÿстерессишĕн

СĔНТЕРВАРРИ. Тырпул тухăçлăхне ÿстерес тесен, уя тислĕкпе тата вырăнти ытти удобренисемпе ытларах çемçетмелле. Нумай колхозсенче халĕ уя тислĕк кăларас тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеççĕ. Хĕле кĕнĕренпе кăна «Искра» колхоз 700 лав, Киров ячĕпе тăракан колхоз 1.300 лав тислĕк кăларнă. Çавăнпа пĕрлех ытти удобренисене хатĕрлесси те ăнăçлă пырать. «Коминтерн» колхозра 54 центнер кĕл, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ лухнă, «Пищевик» тата «Первое мая» колхозсем те вырăнти удобренисем пухас енĕпе лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах та торф кăларса уя турттарас тĕлĕшпе районри колхозсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Çак вăхăта çитсе пĕр колхоз та торф кăларма пикенсе тытăнман.

Уйрăм колхозсем юр тытас ĕçе те пуçăнчĕç. «Çĕнĕ ял» колхоз 65 гектар, Буденнăй ячĕпе тăракан колхоз 25 гектар çине юр тытнă.

И. ОСИПОВ.

Ялхуçалăх машинисем юр айĕнче

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Сĕнтĕрпуç» колхозра ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Плугсем юр айне пулнă. Тимĕрçĕ лаççи умĕнчи жнейкăсем, сеялкăсем те юр айĕнчен кăшт кăна курăнса тăраççĕ. Çак вăхăта çитсе те тимĕрç лаççине уçман.

—Машинăсене юсама вăхăт çитрĕ, анчах та колхозра кăмрăк çукки ĕçе чарать, — тет колхоз тимĕрçи. Çакăн çинчен колхоз председателĕ Миронов юлташ та аван пĕлет, анчах кăмрăк илме çын яма унăн алă çитмест.

И. КУЗНЕЦОВ.

А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнине паллă тума хатĕрленни

Кăçал январĕн 15-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарать. Çак паллă датăна хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлеме комисси тунă. Комиссире Эсхель (председателĕ), Евлампьев, Ерлаков, Ислюков, Бочков, Кăлган, Агаков, Родионов, Токмаков, Денисова, Макаров, Шумков, Студенецкий, Яковлев, Сутягин юлташсем тăраççĕ.

Январĕн 15-мĕшĕнче Шупашкар хулинче чаплă лару пулса иртет. Унта аслă писателĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Сутягин юлташ доклад туса парать. Лару хыççăн Чăваш академи театрĕн чăваш труппи Грибоедов çырнă «Горе от ума» ятлă комеди сыпăкне тата академи театрĕн вырăс труппи «Своя семья» комедин пĕр пайне выляса кăтартаççĕ. «Тăван Атăл» альманахра «Горе от ума» комеди чăвашла пичетленсе тухать. Ака Хусанкай куçарнă.

Аслă писатель А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа республикăри районсенче шкулсенче чаплă ларусем, литература вечерĕсем ирттерме палăртнă.

ТУРКМЕН КЛАССИКĔ ЗЕЛИЛИ ВИЛНĔРЕНПЕ 100 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ ПАЛЛĂ ТĂВАÇÇĔ

Туркмен республикинче «Туркменсен классикла поэчĕ-воинĕ Зелили вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă тăваççĕ. Туркмен халăхĕ нумай çулсем хушши хăйĕн çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн алла хĕçпăшал тытса çапăçнă талантлă поэчĕ ятне чысласа упрать. Зелили çырнă сăвăсемпе юрăсенче тăван çĕршыва юратни, тăшмансене çав тери курайманни палăрса тăрать.

Зелили 1790 çулта Каракалара çуралнă. Туркменири поэтсемпе ученăйсем Зелили çырнă япаласене пухас тĕлĕшпе нумай ĕçлеççĕ. Совет влаçĕ вăхăтĕнче унăн сăввисен сборникне вырăс тата туркмен чĕлхисемпе кăларнă. Халĕ унăн ку таранччен ниçта та пичетленмен сăввисен сборникне вырăсла кăларма хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

КИЕВ ÇĔНЕРЕН ЮСАНАТЬ

Совет Украинин столици нимĕç оккупанчĕсем тунă сурансене сыватса пырать. Аркатса хăварнă нумай çуртсемпе уйрăм кварталсене тасатса çитерне. Крещатик урамĕ çĕнĕрен юсанать. Промышленность предприятийĕсене пурне те тенĕ пекех тата Днепр водопровочĕн тĕп сооруженийĕсене юсанă. Украинăри Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитечĕн çуртне, АТС çуртне, Шевченко ячĕпе тăракан университетăн сулахай çунатне, Крещатик урамĕпе Ленин урамĕ кĕтессинчи универмагăн çуртне юсаса çитереççĕ.

Днепр шывĕн чăнкă çыранĕсем çинче Зверинец районĕнче Наука академийĕн ботаника садне тума пуçланă. Вăл 150 гектар çĕр йышăнать.

Кăçалхи çул Киевра 200.000 тăваткăл метра çити пурăнмалли çуртйĕр [illegible]. Çĕнĕрен тунă çуртсене чи малтан фронтовиксен çемьисене вырнаçтараççĕ. (ТАСС).

В. М. Молотов Венгрин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Дьендеши Янош господина йышăнни

Январĕн 4-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Венгри халăхĕн Вăхăтлăх Правительствин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Дьендеши Янош господина йышăннă.

Хулари учительсен митингĕ

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, шкулсенче ачасене вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе ăнăçлăн тата вăя шеллемесĕр ĕçленĕшĕн РСФСР-ти учительсене орденсемпе медальсем парса наградăланă ятпа, январĕн 4-мĕшĕнче Шупашкарта хулари учительсен митингĕ пулса иртрĕ. Митинга хулари çутĕç пайĕн заведующийĕ Богатырева юлташ уçрĕ.

Малтанах Аникин юлташ сăмах илет. Вăл СССР орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă учительсене саламларĕ, малашнехи ĕçре çитĕнÿсем тума сывлăх сунчĕ.

Ун хыççăн Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул учительници Денисова юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Эпĕ учитель ĕçĕнче чылайранпа ĕçлетĕп ĕнтĕ. Халĕ эпĕ хама ватă тесе шутламастăп. Мĕншĕн тесен совет учителĕ пурнăçра нихăçан та ватăлмасть. Партипе правительство çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿпе тĕрĕс воспитани парса ÿстерессишĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. Лайăх ĕçлекен учительсене яланах хисеплесе мухтаççĕ. Эпĕ те çав мухтава ята тивĕçлĕ пултăм. Мана Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлани вăл — мана наградăлани çеç мар, пирĕн шкулăн коллективне наградăлани пулать. Çак наградăна тивĕçлĕ пулас тесе, эпĕ татах та лайăхрах ĕçлĕп.

Кун хыççăн хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн директорĕ Сергеева, Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров, РСФСР тава тивĕçлĕ учительници Черпакова, 7 çул вĕренмелли чăваш шкулĕн директорĕ Волкова, хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительници Железкова юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен митинга пухăннă учительсем Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ [illegible] талантлă конструкторĕ—инженерĕпе авиаци службин генерал-майорĕ Владимир Григорьевич Ермолаев юлташ кĕске вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайни çинчен хуйхăрса пĕлтереççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ унăн çемьипе пĕрле хуйхăраççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 4-мĕшĕнче БУДАПЕШТ районĕнче пирĕн çарсем хулана тăшмантан тасататассишĕн çапăçнă, 277 квартал йышăннă. Çаканпа пĕр вăхăтрах БУДАПЕШТРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Унта тăшман пысăк çухатусем тÿсет пулин те, хăйĕн Будапешт хулинче çавăрса илнĕ группировкин патне татса кĕрессишĕн çапăçма пăрахмасть. Январĕн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра нимĕçсен 78 танкне çĕмĕрсе тăкнă, нимĕçсемпе венгерсен 1.162 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери БУДАПЕШТРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра тăшманăн 58 самолетне персе ÿкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

☆ ☆ ☆

Будапешт районĕнче пирĕн çарсем нимĕç çарĕсен çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, совет чаçĕсем квартал хыççăн квартала нимĕçсенчен тасатаççĕ, Венгри столицин вăтаçĕрти районĕсем патнелле куçса пыраççĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем çуртсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ, урамсенче тĕрлĕ япаласем купаласа чăрмавсем тăваççĕ. Пир-авăр фабрикипе ун çумĕнчи завод районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Гитлеровецсем çав предприятисенчен оборона узелĕсем тунă, унта персе тăмалли вырăнсем нумай туса тултарнă. Çĕрле Быков майорăн гварди подразделенийĕ завода çавăрса илнĕ. Артиллеристсем хăйсен тупписене усă вырăнсене кăларнă та тăшманăн персе тăмалли вырăнĕсене пусарса лартнă. Унтан совет пехотинецĕсем, вирлĕн атакăласа, завода вăркăнса кĕрсе кайнă та унти гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче Левченко майор ертсе пыракан гварди подразделенийĕнчи боецсем пир-авăр фабрики патне таччăнах сывхарса çитнĕ те унăн çурчĕсене штурмласа туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухату кÿнĕ. Çав пир-авăр фабрики территорийĕнче кăна нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 виллине çити выртса юлнă. Çĕрле пĕр подразделени танкисчĕсем тăшманăн çĕр айĕнчи ангарĕсем патне пырса тухнă. Пирĕн танксем ангарсене кĕмелли вырăнсем умне пырса тăнă та унти гитлеровецсен каялла чакмалли çулĕсене пÿлсе лартнă. Тăшманăн 400 салтакĕпе офицерĕ ытла (унта пуринчен ытларах нимĕçсем пулнă) алăри хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăннă. Пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ.

Совет воинĕсем тăшманпа хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр, паттăррăн çапăçаççĕ. Николай Михайлов сержант взводĕ пĕр пысăк çурта штурмласа туртса илнĕ. Çав çурт патне çывхарса çитсен, боецсем çурта чÿречерен темиçе граната пăрахнă, унтан вара çурт ăшне вăркăнса кĕрсе кайнă. Кĕске тытăçура пирĕн боецсем 28 нимĕçе вĕлернĕ. Цыгановпа Михайлов красноармеецсем тăшманăн 2 пулеметне çĕмĕрсе тăкнă. Тупă командирĕ сержант Федор Лисовой хăйĕн туппине уçă позицие кăларса лартнă та тăшман дотне — кирпĕч складне—тÿрĕ персе ишсе антарнă. Ишĕлсе аннă çурт айĕнче гитлеровецсен отрячĕ хăйсен пилĕк пулемечĕпе пĕрле пĕтсе ларнă. Миловидов пулеметчик тăшман контратакине сирсе янă чухне 15 нимĕçе вĕлернĕ. Карташов рядовой тăшман бронетранспортерне вут тивертсе янă. Çав бронетранспортертан сиксе тухнă 7 гитлеровеца автоматпа персе вĕлернĕ.

* * *

Будапешт хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Унти атакăсене нимĕçсем 6 танковăй дивизин чаçĕсене тата темиçе пехота дивизийĕн чаçĕсене кĕртсе янă, вĕсем хăйсен Будапешт хулинче çавăрса илнĕ группировкине пулăшмашкăн татса кĕме хăтланаççĕ. Совет пехотинецĕсем, артиллерисчĕсем тата бронебойщикĕсем çапăçусенче тăшман танкĕсемпе вĕсем хыççăн пыракан нимĕç пехотин атакисене сире-сире яраççĕ. Дунай шывĕн кăнтăр хĕрринче уйрĕмах хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Пирĕн танковăй подразделенисем çапăçăва васкаса çитнĕ те тăшманăн хăйсенчен йышлăрах вăйĕсене хирĕç пырса çапнă. Темиçе сехет хушши пынă çапăçура совет танкисчĕсем 1.500 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, нимĕçсен 53 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине, 16 бронетранспортерне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, боеприпассемпе горючи турттарса пыракан 50 автомашинăна çĕмĕрсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшман хăй тĕллĕн çÿрекен 12 тупăпа темиçе бронетранспортера атакăна кĕртсе янă. Совет боецĕсем гварди капитанĕ Алновский пуç пулса ертсе пынипе тăшмана вăйлă çĕмĕрнĕ. Вĕсем хăй тĕллĕн çÿрекен 7 тупăпа 2 бронетранспортера персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, вара нимĕçсен ирĕксĕрех хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакма лекнĕ.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсемпе техники пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсене пыра-пыра çапнă. Кун каçиччен совет летчикĕсем темиçе вунă танк тата 200 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра нимĕç пехотин пĕр роти çапăçса разведка тума хăтланнă. Пирĕн малти подразделенисем гитлеровецсене вăхăтра асăрханă та хирĕç пырса çапса каялла хăваласа янă. 6 нимĕç салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Остроленка хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Зубков капитанăн подразделенийĕнчи разведчиксем тăшман çĕрле атака тума хатĕрленнине пĕлнĕ. Байтимиров сержант ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ пирĕн оборона хĕрринчен малалла кайса засадăна кĕрсе ларнă. Каç пулса çитсен, нимĕçсен разведка отрячĕ пирĕн позицисем патне таччăнах сывхарса çитнĕ. Совет пулеметчикĕсем тăшмана вăйлăн пеме тытăннă. Кăна кĕтмен гитлеровецсем каялла чакма тытăннă, анчах та çав вăхăтрах вĕсене пирĕн засадăра ларакан боецсем пеме тытăннă. Тăшман ним йĕрки-палли сĕр каялла чакнă, пирĕн позицисем умĕнче гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсен 40 виллине çити выртса юлнă.

Ял Совет исполкомĕн авторитечĕ ĕçре ÿссе пырать

Конституци тăрăх, ял Советсене хăйсен территорийĕнче культурăпа хуçалăх строительствине ертсе пыма, вырăнти бюджета палăртма, государство йĕркине сăнаса тăма, законсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртме, граждăнсен прависене сыхлама право панă. Ял Совет исполкомĕн авторитечĕ, тĕпрен илсен, çав ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынинчен килет. Çакна Йĕпреç районĕнчи Тури Кĕлĕшкаоси ял Совет исполкомĕн председателĕ Ф. Никифоров юлташ тата ял Совет депутачĕсем яланах асра тытаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ унта ял Совет исполкомĕн ĕçне умра тăракан мĕнпур задачăсене вăхăтра пурнăçа кĕртес, ĕççыннисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерес май организацилесе пыраççĕ.

Иртнĕ çулта ял Совет исполкомĕн сессийĕсене кашни уйăхрах йĕркеллĕн ирттерсе пынă. Сессисенче колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленни, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана мĕнле тултарни, тырпулсене пухса кĕртесси, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртесси çинчен сÿтсе-явнă. Унсăр пуçне ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче политикăллă-массăллă ĕçпе укçа-тенкĕ пухасси çинчен тата ытти чылай ыйтусене сÿтсе-явнă. Вăл ыйтусем тăрăх йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе пынă. Калас пулать, ял Советне кĕрекен колхозсем, ял Совет исполкомĕ пулăшса пынипе, ял хуçалăх çулне начар мар вĕçлерĕç. Тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пуçтарса кĕнĕ, государство умĕнчи обязательствăсене срокра парса татнă. «Искра» колхоз ĕçкунĕсем тăрăх пĕрер килограмм ытла тырă салатса панă. «Коминтерн» колхозра та ĕçсем начар мар пыраççĕ.

Халĕ ял Советĕнчи колхозсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Колхозсенче вăрлăх тасатас ĕç пырать. «Искра» колхозра пур вăрлăхсене те тасатса пĕтернĕ. Колхозсем уйхире тислĕк кăлараççĕ, сывăх кунсенчех ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтереççĕ. Çак ĕçсене тунă çĕрте ялти актив тăрăшса ĕçлет.

Ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухмалли, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плансене вăхăтра пурнăçа кĕртет. Чугун çул валли вутă хатĕрлемелли тăваттăмĕш кварталти плана тултарнă хыççăн, 1945 çулхи плана тултарассишĕн кĕрешме тытăнчĕç. Ял Совет исполкомĕн председателĕ Никифоров юлташ вăрманта ĕçлекенсем патĕнче час-часах пулать.

Ял Совет исполкомĕ хăйĕн задачисене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пынă май, унăн авторитечĕ те ÿссех пырать. Ялти ĕççыннисем хăйсен пурнăçĕнчи ыйтусене сÿтсе-явма ял Советне пыраççĕ. Ял Совет исполкомĕ вара вăл ыйтусене татса парас ĕçе ялти актива, депутатсене явăçтарать.

Ял Совет исполкомĕ ялти активăн политикăллă пĕлĕвне ÿстерес ĕçе те манса хăвармасть. Халĕ актив Сталин юлташ 1944 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин 27 çул тултарни çинчен тунă доклада тата приказа вĕренет.

Нумай пулмасть, ял Совет исполкомĕн ĕçĕсем çинчен районри Совет сессийĕнче сÿтсе-яврĕ. Сесси ял Совет исполком председателĕн Никифоров юлташăн докладне итленĕ хыççăн, ял Совет исполкомĕн ĕçне ырласа, унăн опытне сарса пыма кирлине палăртрĕ.

П. КУРАКОВ.

ЙĔПРЕÇ.

Хур-кăвакалсене ытларах ĕрчетер!

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хур-кăвакалсем хăвăрт ĕрчеççĕ тата пысăк тупăш параççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн районри колхозсенче кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕç чылай ÿсрĕ.

Хур-кăвакал ĕрчетни кĕске вăхăт хушшинчех Хĕрлĕ Çарпа Тăван çĕршыва валли аш-какай, тĕк, мамăк тата ытти те туса илме май парать. Çакна шута илсе, пирĕн районра 47 колхозра хур-кăвакал фермисем организациленĕ. Вĕсенче пиншер пуç хур-кăвакал шутланать.

Пирĕн районра хур-кăвакал ĕрчетессипе уйрăмăнах «Аниш» колхоз палăрса тăрать, унăн çĕршер пуç хур-кăвакал пур. Кунта çак ĕçе ферма заведующийĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ Митрофанов ертсе пырать. Çак колхозри хур-кăвакал фермине 1933-мĕш çулта организациленĕ. Хур-кăвакал ĕрчетсе мала тухса, колхоз Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулчĕ тата выставкомăн грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕ. 1937 çулта колхоз государствăна хур-кăвакал какайĕ нумай сутса, государствăран автомашина илчĕ. Çулсеренех колхоз хур-кăвакал нумай ĕрчетсе пысăк тупăш илет. Вĕсем кашни кĕркуннех обязательство тăрăх государствăна аш-какай памалли плана хур-кăвакал парса татаççĕ.

1945 çулшăн государствăна аванс шучĕпе 120 пуç хур-кăвакал панă.

Кунта колхозниксемпе колхозницăсем хур-кăвакалсене пăхса усрама, ĕрчетме вĕренсе çитнĕ. Колхозра çакăн пек йĕрке тунă: февраль уйăхĕн пуçламĕшĕнче колхозниксене çăмарта тăвакан 4—8 хур çирĕплетсе параççĕ. Хур-кăвакал пăхакансен кашни чĕппе икĕ килограмм йывăрăш пуличчен пăхса çитĕнтермелле. Çавăн пек çитĕнтернĕ кашни 5 чĕпĕшĕн 2.5 ĕçкунĕ. 5 чĕпĕрен ытларах ÿстернĕ кашни чĕпĕшĕн 3-шер ĕçкунĕ тÿлеççĕ. Колхозниксем хур-кăвакал çитĕнтерсе панăшăн нумай ĕçкунĕсем илеççĕ. Вĕсем кăçалхи çул та сахал мар хур-кăвакал ÿстерчĕç, нумай ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç. Уйрăм колхозницăсем çак тĕлĕшпе питех те тăрăшса ĕçлерĕç. Фронтовик арăмĕ Александра Матвеева 4 хур аминчен 42 чĕп пăхса çитĕнтернĕ, уншăн ăна 156 ĕçкунĕ тÿленĕ. Çавăн пекех Анна Илларионова та 5 амаран 40 чĕпĕ пăхса çитĕнтернĕ.

Анчах хур-кăвакал ĕрчетес ĕç уйрăм колхозсенче çителĕксĕр пырать-ха. Сăмахран, «Новая жизнь» колхоз (председателĕ Кузьмин юлташ), Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Мешков юлташ) хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçласа пымаççĕ, кунта хур-кăвакал ĕрчетмелли плана тултарман.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) Октябрьски райкомĕн секретарĕ.

Выльăхсене лайăх пăхса усратпăр, выльăх апатне перекетлетпĕр

Выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ пулса эпĕ виççĕмĕш çул ĕçлетĕп. Унччен конюхра 6 çул ĕçлерĕм.

Виçĕ çул каялла Ишлей районĕнчи «Пархикасси» колхозăн фермисенче ĕне выльăхсем 20 пуç, сурăхсем 25 пуç кăначчĕ. Халĕ пирĕн колхозра 4 ферма. Вĕсенче мăйракаллă шултăра выльăхсем 52 пуç, сурăхсем 65 пуç, сыснасем 52 пуç тата чăхсем 90 пуç пур. Пур выльăхсем енĕпе те государство планне тултартăмăр.

Юлашки икĕ çул хушшинче фермăри выльăхсен планне тултарас тесе закрăн выльăх илмен. Плана çамрăк выльăхсене çитĕнтернипе тултарнă. Пĕлтĕр эпир 19 пăру, 74 сысна çури илнĕ, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ.

Фермăра ĕçлекенсем çуллахи вăхăтра выльăхсем валли апат хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Арăмути, вĕлтрен хатĕрлесе типĕтрĕç. 60 тонна силос хывса хăварчĕç.

Выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрлентĕмĕр. Ферма çурт-йĕрĕсем, витесем çителĕклĕ. Шăтăк-çурăксене питĕрнĕ, чÿречесем лартнă. Çамрăк выльăхсем валли те çуртсем çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Выльăхсем валли колхоз правленийĕ çуртырри уламĕ 880 центнер, ыраш уламĕ 1.045 центнер, тырă 420 центнер, çĕрулми тата кăшман 425 центнер уйăрса пачĕ. Вĕсене эпĕ йăлтах актпа йышăннă. Çуртырри уламне фермăсен çурчĕсем сывăхне турттарса пырса, купаласа хунă. Апат фермăри выльăхсене усрама ытлашшипех çитет. Ăна тирпейлĕн тыткалас тесе фермăри кашни работник тăрăшать. Апата выльăхсене нормăпа çитеретпĕр. Хальхи вăхăтра тĕрлĕ апат çитеретпĕр. Улампа пĕрлех, сĕтеклĕ апат—силос паратпăр. Силосăн пахалăхĕ лайăх, выльăхсем юратса çиеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсене зоотехникăпа ветеринари ĕçне пĕлменни пысăк чăрмав кÿрет. Пире вĕрентес енĕпе ĕçлеме пирĕн колхоза Сергеева ветсанитара çирĕплетсе панă. Анчах вăл пирĕн пата ик-виç уйăхра та килсе пăхмасть.

Хĕл вăхăчĕ—выльăхсене пăхмалли ответлă вăхăт. Уйрăмах çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илмелле. Пирĕн фермăри работниксем выльăхсем хăçан пăруламаллине лайăх пĕлеççĕ.

П. ФЕДОРОВ,
Фермăсен заведующийĕ.

Лашасене хисеплемен колхозра

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхозра лашасене хисеплемеççĕ. Колхоз председателĕ Ларионов лашасем çине чунсăррăн пăхать. Вăл председатель пулса ĕçлеме пуçланăранпа лашасен хисепĕ нумай чакрĕ.

Уйрăмăнах 3-мĕш бригадăра (бригадирĕ К. Кучеров) нумай лаша чакрĕ. Ку бригадăра кăçал 6 лаша вилнĕ. Колхоз председателĕ Ларионов айăплисем пирки тивĕçлĕ мера йышăнма тăрăшмасть.

Кăçал икĕ кĕсре хăм пăрахнă. Пĕри 4-мĕш бригадăра (бригадирĕ И. Егоров) нумай тиесе хытă хăваланипе, тепри 2-мĕш бригадăра (бригадирĕ Никифоров) йĕркеллĕ пăхман пирки хăм пăрахнă.

Ку çеç те мар, 5-мĕш бригадăн лашасене хупма вите те çук. Лашасене ытла та начар пăхаççĕ. Конюхсене пурăнма тивĕçлĕ услови туса паман. Вите патĕнче тараса та, конюхсем валли пÿрт те çук. Колхоз председателĕ Ларионов çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхозра лашасене пăхас енĕпе тивĕçлĕ улшăну тумалла. Лашасем çине чунсăррăн пăхакансене ответ тыттармалла.

В. НАУМОВ.

Редакцие килнĕ сыру

Опытник ĕçне хакламаççĕ

Опытник Федор Яковлевич Сусликов колхоз пуçланнăранпах пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе ĕçлет.

1932 çултан пуçласа вăл дыньăсем лартса ÿстерес тĕлĕшпе опытсем тума тытăннă. Дыня ăнăçлă ÿсе çитĕннине кăтартса панă хыççăн, Сусликов юлташ арбуз туса илессипе ĕçлет. 1938 çулта вăл лайăх пиçнĕ 60 арбуз пуçтарса илет, хăшпĕрисем вĕсенчен 5 килограмм çити тайнă. Тепĕр çулхине вара вăл колхоза пысăк тупăш памалăхах арбуз туса илет: опыт тăвакан участокра вăтамран 5—7 килограмм туртакан арбузсем 4000 яхăн çитĕнеççĕ. Çак опытсене вăл Атăл хĕрринче усă курмасăр выртакан хăйăрсем çинче туса ирттернĕ.

Çапла ĕнтĕ, опытник Федор Яковлевич республикăри нумай вырăнсенчи колхозсенче арбуз ăнăçлăн туса илме май пуррине темиçе çулхи опытпа кăтартса пачĕ. Пархатарлă та кирлĕ ĕç! Усăллă та хаклă пуçарăва малалла аталантарса пымашкăн пулăшма кирли усăмлăнах курăнса тăрать. Анчах мĕн куратпăр-ха эпир?

Опытник хăй çуралса ÿснĕ Минкĕш ялĕнчи «1-ое Мая» колхозра çÿлте асăннă культурăсене çитĕнтерес тĕлĕшпе мĕн опытсем тума пуçланăранпах пысăк чăрмавсем курать. Ун чухне колхоза ертсе пынă çынсем Сусликов юлташăн çĕнĕ пуçарăвĕ пирки тÿрех çапла каланă: «Кăмăлу пулсан чакалан. Сан ĕçшĕн колхоз тÿлемест, ĕçлеме çынсем те памасть».

Опытник пĕр тытăннă ĕçе пăрахма шутламасть. Вăл икĕ çул хушши никамран пĕр пулăшу курмасăр тăрăшать. Иккĕмĕш çулĕнче хуралçăпа шыв сапакана та хăйĕнчен тÿленĕ. Виççĕмĕш çулĕнче тин, ыйтăва райисполком умĕнче лартнă хыççăн, Сусликов юлташпа хуралçа 98 ĕçкунĕ параççĕ. Опытникăн ĕçне хирĕç пыракансенчен пĕри вăл—колхоз председателĕн заместителĕ Чернов Сергей пулса тăрать. Вăл çак таранччченех çакна манма пултараймасть: Сусликов юлташ колхозри пахча-çимĕç туса илес ĕçе ертсе пыма пуçласан, парник хуçалăхне лайăх йĕркелесе ярать те, лартма кирлĕ çимĕçсене уйрăм çынсенчен илсе пырассине пĕтерет. Пахча-çимĕçсен калчисене колхоза туса парса, Чернов арăмĕ те чылаях тупăш илсе пынă иккен. Чернов шучĕпе ĕнтĕ Сусликов юлташ ун çулĕ çине тăчĕ пулать. Çавна пула вăл опытника кирек-хăçан та чăрмав кÿме тăрăшать.

Районри çĕрç пайĕнче халиччен ĕçленĕ, çавăн пекех халĕ ĕçлекен руководительсем те Сусликов юлташăн пуçарăвне хака хумаççĕ.

Опытник ĕçне хакламанни районра халĕ уйрăмах сисĕнет. Сусликов юлташа, хăш пĕр çынсем тăрăшнипе, овощеводран та кăларнă. Районри руководительсем çакна «курмана-илтмене» персе ирттерсе ярасшăн. Опытникăн темиçе çул ĕçлесе пухнă практикăллă çитĕнĕвĕсене пĕтерсе лартма тăрăшакансене ответ тыттармалла. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Сусликов опытникăн ĕçĕсемпе чăннипе интересленсе пăхмалла, унăн пуçарăвне сарассишĕн тăрăшмалла.

М. ОГОРОДНИКОВ.

КУСЛАВККА.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицийллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ январĕн 4-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă.

Голландире икĕ енче те патрульсем кĕрешнĕ. Январĕн 3-мĕшĕнче ирхине Арден савăлĕ районĕнче союзниксен çарĕсем Гранмениль хули патĕнче контратака тунă. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, союзниксен çарĕсем самаях пысăк çитĕнÿ тунă. Союзниксен çарĕсем Рошфор хулинчен кăнтăртарахра малалла кайнă.

Арден савăлĕн кăнтăрти флангĕнче, Векбиль хулинчен кăнтăртарахра, союзниксен чаçĕсем пĕр миля таран малалла кайнă, вĕсем тăшманпа Боннрю хулинчен хĕвелтухăçнерехри вăрманлă вырăнта çапăçаççĕ.

Бастонь хули патĕнчи савăл районĕнче Бононшан хулине туртса илнĕ, союзниксен чаçĕсем тăшманпа Лоншан тата Бурси хулисен районĕнче çапăçаççĕ.

Январĕн 3-мĕшĕнче вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн Арден савăлĕнчи Уффализри çулйĕр центрĕсене тапăннă. Саар шывĕ улăхĕнче союзниксен çарĕсем Фолькинген хулинчен 2,5 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехри района тăшмантан тасатнă.

Саргемюнд хулинчен хĕвелтухăçнерехре, Хабкирхен хули сывăхĕнче, нимĕçсен пĕчĕк отрячĕсем юханшыв урлă каçнă. Анчах союзниксен артиллерийĕ вĕсене малалла кайма паман. Тăшман Гросредершинген хулине кĕрсе кайнă. Лахен хули таврашĕнче çапăçусем пыраççĕ.

Битш хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата кăнтăртарахри вăрманлă вырăнта тăшман хĕсни вăйсăрланнă.

Эльзас тÿлеменче, Кольмар хулинчен çурçĕртерехре, союзниксен çарĕсем тăшман атакисене сирсе янă, унтан хăйсем контратака тунă та пăртак çитĕнÿсем тунă.

Январĕн 3-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Рур облаçĕнчи икĕ бензол заводне тата Дортмунд хули сывăхĕнчи Кастроп-Рауксель тата Ганс заводĕсене тапăннă. Ытти вырăнсенче, çанталăк начар тăнă пирки, авиаци вăйлă кĕрешме пултарайман.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ январĕн 4-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Равенна хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Канада чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, Фоссо-Веккьо хулинчен хĕвеланăçнерехре каллех малалла кайнă, нимĕçсен тăватă вăйлă контратакине сирсе янă. 5-мĕш арми фронтĕнче патрульсем кĕрешнĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.300 вĕçеве яхăн тунă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Боснире нимĕçсем Биелинăран тата Брезовăран тухса тапăнма хăтланнисене сире-сире пăрахнă. Лим улăхĕнче çапăçусем пыраççĕ. Уйрăмах хаяр çапăçусем Босна улăхĕнче пулса иртеççĕ. Югослави чаçĕсем çĕрле кĕтмен çĕртен тапăннипе пула, нимĕç колоннисен малти пайĕсем васкасах каялла чакнă. Уна улăхĕнче Югослави чаçĕсем Деляне тата Добро Село ятлă пунктсене ирĕке кăларнă.

Хорватире икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн Югослави чаçĕсем Ваганац, Пурачич тата халăх пурăнакан ытти пунктсене йышăннă.

Славонире çапăçусем пыраççĕ.

ПОЛЬША ХАЛАХĔ ПОЛЬША РЕСПУБЛИКИН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ САЛАМЛАТЬ

ЛЮБЛИН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Польша республикин 1921 çулхи мартăн 17-мĕшĕнчи конституцийĕ тăрăх Польша Халăх Совечĕн президенчĕ халăхăн Вăхăтлăх Правительствине туса хунине Польша халăхĕн тĕрлĕ сийĕсем хавасланса йышăнаççĕ. Польшăн ирĕке кăларнă районĕсенче хуласемпе ялсенчен Польша Халăх Совечĕн президенчĕ Берут ячĕпе тата Осубка-Моравский премьер-министр ячĕпе телеграммăсем пыраççĕ. Вăл телеграммăсенче Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине туса хунипе савăнни çинчен пĕлтереççĕ.

Польша хаçачĕсем Польша Халăх Совечĕн сессийĕ йышăннă решенисем çинчен нумай çыраççĕ. «Речь Посполита» хаçатăн паянхи номерĕнче Вăхăтлăх Правительствăн программи пирки çапла каланă: «Юлашки виçĕ кун хушшинче Люблинра çĕнĕрен çуралакан демократиллĕ Польшăн никĕсне хывнă. Польша Совет Союзĕпе тата Чехословакипе тачă çыхăнса ĕçлĕ, мĕншĕн тесен çав кÿршĕсемпе Польшăн тăванла çыхăнусем пысăк. Вăрçăчченхи Польша правительствисем пурте, халăх интересĕсене пăхăнмасăр, Польшăна çав çĕршывсемпе çыхăнассинчен пăрса яма тăрăшнă. Вăхăтлăх правительство обществăпа экономика тĕлĕшĕнчен тахçанах кирлĕ пулнă реформăсене туса ирттернĕ».

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙНЕ ФРАНЦИН НАЦИ СОВЕТĔНЧЕ ЙЫШĂННИ

ПАРИЖ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: тăшмана хирĕç тăракан Наци Совечĕ ĕнер совет профсоюзĕсен делегацийĕ ячĕпе йышăну туса ирттернĕ. Совет председателĕ Луи Сайян делегаци урлă Совет Союзĕнчи ĕççыннисене саламланă.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕн пуçлăхĕ Соловьев юлташ, Франци патриочĕсене саламласа, çапла каланă: пĕрлехи тăшмана хирĕç пыракан кĕрешÿре совет çыннисем, американецсем, акăлчансем, французсем тата мĕнпур союзниксем юн тăкни халăхсем туслăхне çирĕплетрĕ. Франципе Совет Союзĕ хушшинче нумаях пулмасть тунă договор та халăхсем хушшинчи çав туслăх çинчен калать. Вăрçа хăвăртрах тата çĕнтерÿллĕ вĕçлес тесе, Франци халăхĕн Пĕрлешÿллĕ ытти нацисемпе пĕрле кĕрешмелле, тенĕ Соловьев юлташ.

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ЯЧĔПЕ ПАРИЖРА ЧАПЛА ВЕЧЕР ИРТТЕРНĔ

ПАРИЖ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине опера театрĕнче совет профсоюзĕсен делегацийĕ ячĕпе Пĕтĕмĕшле Ĕç Конфедерацийĕ чаплă вечер туса ирттернĕ. Вечерта СССР посолĕ А. Е. Богомолов тата Франци халăхĕн агрессие хирĕç кĕрешекен совечĕн председателĕ Луи Сайян пулнă. Совет профсоюзĕсен делегацийĕн председателĕ Л. Н. Соловьев сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Францири рабочи класс нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешнине тивĕçлĕ хак панă тата Франципе Совет Союзĕ пĕр-перинпе союзлă пулассине çинчен тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен нумаях пулмасть Мускавра тунă договор мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

ФРАНЦИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ НАЦИСЕН ДЕКЛАРАЦИЙĔ СУМНЕ ХУТШĂННИ ÇИНЧЕН ОФИЦИАЛЬНĂЙ ЙĔРКЕПЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Францин США-ри посолĕ Анри Бонне январĕн 1-мĕшĕнче, Пĕрлешÿллĕ Нацисем йышăннă деклараци виçĕ çул тултарнă кун, çав деклараци çине Франци ячĕпе алă пуснă. Çапла вара вăл Пĕрлешÿллĕ Нацисен 36-мĕш членĕ пулса тăнă.

США КОНГРЕСĔН ÇĔНĔ СЕССИЙĔ УÇĂЛНĂ

ВАШИНГТОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер 79-мĕш созыври конгрессăн, 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче суйланăскерĕн, сессийĕ уçăлнă.

Представительсен палати хăйĕн председателĕ пулма Рейбэрна (Техас штатĕнчен, демократ) суйланă. Уншăн палатăра 224 çын сасăланă, Мартин республиканецшăн (Массачузетс штачĕ) 168 сасă кăна панă. Çапла вара Рейбэрна представительсен палатин председателĕ пулма 4-мĕш хут суйланă. Представительсен палатинче Мартин республиканецсен лидерĕ пулса юлать.

Конституци тăрăх, вице-президент Уоллес çĕнĕ вице-президент Трумен ĕçлеме пуçличченех, урăхла каласан—январĕн 20-мĕшĕччченех, сенат председателĕн ĕçĕсене туса пырать.

Хăйне председателе суйласа лартнă хыççăн Рейбэрн представительсен палатинче кĕске сăмах каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл халăх хушшинче пĕрлĕх тума тата пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхе çирĕплетме чĕннĕ. Вăл çапла каланă: «Мир тытса тăма вăйпа усă курмалла пулсан, Пĕрлешÿллĕ Штатсен, ман шутпа, ытти демократиллĕ мирлĕ нацисемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчере йĕркелĕх тата мир тăвассишĕн пур вăйпа та усă курмалла».

ШВЕЙЦАРИ ГЕРМАНИЕ ЭКОНОМИКĂЛЛА ПУЛĂШУ ПАМА ЧАРĂНМАСТЬ

ПАРИЖ, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Парижри кăларăмĕн статьине панă. Вăл статьяра Швейцари ку таранччченех Германие тĕп-тĕрĕс приборсем, тĕрлĕ аппаратура тата машинăсем ярса тăни çинчен каланă. Швейцарие унăн хальхи шухăш-кăмăлне улăштарма кирли çинчен асăрхаттармалла, тет хаçат. Çавăн пекех Швейцарие Çурçĕр Италие çĕркăмрăк ярса тăма чармалла. Германие тĕрлĕ япаласем ярса тăрса, Швейцари унăн экономикине пулăшать. Çак япалана пĕтерсе хурас пулать.

СТЕТТИНИУС КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Корреспондентсем Стеттиниуса çакăн пек ыйту çырса панă: Швейцарие Германипе суту-илÿ тăвассине чакарттарас тесе США мĕн те пулин тума шутлать-и? Стеттиниус çапла ответленĕ: США-па Швейцари хушшинчи экономикăллă çыхăнусен пĕтĕм ыйтăвне халĕ пăхса тухаççĕ, тенĕ.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Афины хули варринче Англи çарĕсем çурçĕрелле 400 ярд куçнă (ярд —метрăн 0.9-мĕш пайĕ). Çавăн умĕн ЭЛАС отрячĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. 40 партизана яхăн вĕлернĕ, çавăн чухлех амантнă. Тыткăна илнисем пур.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Грецин Пластирас генерал туса хунă çĕнĕ правительствине 7 министр тата министрсен 5 заместителĕ кĕреççĕ. Пластирас генерал премьер-министр пулнисĕр пуçне тата çар министрĕн, çар флочĕн, авиацин тата суту-илÿ флочĕн министрĕсен ĕçĕсене те хăй çине илнĕ. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма Софианопулоса (аграрнăй парти) лартнă, вăлах информаци министрĕ те пулмалла.

Çĕнĕ правительствăна, пĕтĕмĕшпе илсен, партире тăман çынсен правительстви тесе хаклама пулать, тесе çырать корреспондент.

Либералсен партийĕн лидерĕ Софулис, «прогрессивнăй демократсен партийĕн» лидерĕ Кафандарис тата премьер-министр пулнă Папандреу çĕнĕ правительствăна пулăшма пулни çинчен пĕлтернĕ.

—⊙—

КĔСКЕН

Январĕн 2-мĕшĕнче, авиаци катастрофине пула, союзниксен Европăри тинĕс-çар вăйĕсен главнокомандующийĕ Рамсей адмирал вилнĕ.

* * *

Халăх переписĕ тăрăх, Финлянди столицинче—Хельсинки хулинче—1944 çулăн вĕçĕнче 334.716 çын шутланнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

И. А. Крылов баснисем

Вырăс халăхĕн нацилле культурине тăвакансенчен пĕри, «вырăс литературин чысĕ, мухтавĕ, мăнаçлăхĕ» пулса юлнă И. А. Крылов баснисен пуххи чăвашла тухрĕ. Çакă ĕнтĕ эпир вырăссен паллă поэтне питĕ юратнине, «вырăс халăхĕн ăслăлăх кĕнекине» вуласа ăс илесшĕн çуннине кăтартать тата художествăллă литературăна чăвашла куçарас ăсталăх ÿссе чылаях çÿле хăпарса çитнине пĕлтерет.

Крыловăн художество енĕпе нихçан пулман ăсталăхпа илемлетнĕ баснисем вырăс халăхĕн шухăшĕсемпе унăн ĕмĕчĕсен тĕкĕрĕ пулса юлнă. Вĕсенче вырăс халăхĕн ылттăн чунĕ, паха характерĕ, пуян ăсĕ курăнать, вĕсем тăван çĕршыва юратма, ырă кăмăллă пулма, талантпа ĕçе юратма, хисеплеме, тÿрĕ пулма, халăха усă кÿрессишĕн кĕрешме йыхăраççĕ.

Кĕнеке Д. Благой профессорăн «Вырăссен баснйăсем çырнă аслă писателĕ» ятлă статьипе уçăлать. Иллюстрацисем пур: аслă баснописецăн сăнÿкерчĕкĕсем виççĕ, баснйăсен сюжечĕпе тунă ÿкерчĕксем вуннă кĕнĕ, вуннăшĕ те аван, пысăк художниксем тунисем.

Чи малтан, çулăмлă патриот-поэт 1812 çулти Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче çырнă паха баснйăсене («Йытă витине лекнĕ Кашкăр», «Обоз», «Çăрттанпа кушак», «Йытă туслăхĕ») кĕртнĕ, ун хыççăн ытти темăсемпе çырнисенчен чи паллисене кĕртнĕ. Вĕсене виçĕ поэт: Ст. Шавлы, Н Пиктемир, Г. Кореньков куçарнă

Г. Кореньков куçарнисем кĕнекене 8 басня кĕнĕ. Вĕсене вăл Крылов сăввине тытса мар, пурне те çичĕ слоглă сăвăлапа куçарса пынă. Урăхла куçарма унăн май те пулман, — вăл ĕлĕк тоникăпа сăвă çырасси чăваш литературине кĕриччен, куçарнă вĕсене.

Куçарнă чух Крыловран айккарах кайнисем, хăйĕнчен хушса хунисем те пулни курăнать. Хăш чух вăл юмахçă пек, «тет» сăмахсемпе каласа парать, вăл куçарнă баснйăсенче вырăс йăли мар, чăваш йăли ытларах. Ку ĕнтĕ хальхи куçару теорийĕпе тата практикипе килĕшсех каймасть. Чĕлхи вара аван унăн, чăн чăваш чĕлхи, шыв пек юхса пырать. Мĕне тăрать, акă вăл куçарнă «Шăрчăкпа Кăткă»!

«Тринки-тринки сикекен
Шăрчăк тусăн юрласа
Çу иртни те сисĕнмен.
Пăхать каялла çаврăнса —
Кĕр те иртнĕ, хĕл çитет;
Уй пушаннă, сивĕтет.
Çулла, хĕвел çуттинче,
Пĕтĕм курăк хÿттинче
Сĕтелĕ те, пÿрчĕ те,
Шăрчăк тусшăн пурччĕ те,
Халь çук ĕнтĕ нимĕн те—
Çаранĕн те, хирĕн те»...

Н. Пиктемир Крылова аван куçарни çинчен эпир пĕрре «Чăваш Коммуни» хаçатăн 1944 çулти 229-мĕш номерĕнче асăнăччĕ. Сăвăсен виçине кăна мар, строкасен хисепне те вырăсли пекех туса пынă вăл, хăйĕнчен хушса хунă сăнлăхсем çук. Çитменлĕх — «Улакуракпа Тилĕ» баснйăн моралĕ улшăннă: Крылов «пуçа мăнна хуни» çинчен каламан-çке унта, «в сердце льстец всегда отыщет уголок», тенĕ-çке!

Кĕнекене кĕнĕ 24 баснйăна Шавлы куçарнă. Кĕнеке хулăнăшне халăх умне кăлармаллах Шавлы хăпартнă. Вăл хăйĕн ĕçĕнче Крыловăн ялтăрса тăракан юморне, унăн халăх хушшинчен тухакан иронине чылай çĕрте чиперех пама пултарнă. Анчах ăна пĕр япала кăна пăснă—Крылова ирĕклĕнтерех куçарас çулпа кайма тытăннă вăл.

Ирĕклĕн куçарнă пирки çакăн йышши çитменлĕхсем пур. «Çумăр пĕлĕчĕ» баснйăра «И щедростью своей хвалилась пред горою» тенине:

Сăрт умĕнче мухтаннă Пĕлĕт:
«Пуйтартăм эпĕ тăвана...
Куратри эсир, — сăнăр, пĕлĕр,
Епте ватать вăл çырана!»—

тесе куçарни Крылова «юсани» пулать.

Малалла:

«Что сделала добра
Ты щедростью такою?»
Сказала ей гора.
«И как смотреть на то не больно!
Когда бы на поля свой дождь ты пролила,
Ты бы область целую от голода спасла.
А в море без тебя, мой друг, воды довольно».

Чăвашли çапла:

Сăрт-ту ăна çапла каланă:
«Йĕрес чухне—асан ху май,
Уйхир çине çăвасчĕ санăн!
Тинĕсре шыв ахаль те нумай».

Крылов баснйăра правительство, выçлăх вăхăтĕнче Псков губернаторне наградăласа, выçăпа аптранисене нимĕнле пулăшу та паманнине тĕртсе çырнă. Çавăнпа баснйăн тĕп шухăшне паракан сăмахсене—«ты бы область целую от голода спасла» тенисене куçармасăр хăварнипе килĕшме пултараймастпăр.

«Кăсăя» баснйăра Крыловăн «çук тупрана юратакансем» тинĕс шывĕ çунна чухне пиçес пулă шÿрпине çиме кашăксем йăтса чупаççĕ. Чăвашлинче кашăксем йăтса мар, «атмапалах чупаççĕ».

Ирĕклĕн куçарнă пиркиех Крыловăн çăра сăрĕсем шĕвелсе тĕллĕн-тĕллĕн тĕссĕре тухнă. «Сысна» баснйăра:

«Вокруг конюшен там и кухонь
наслонялась,
В сору, в навозе извалялась,
В помоях по уши, до-сыта
накупалась».

Чăвашлинче:

«Тăрмалашать навус çинче,
Хура шыва кĕрсе ÿкет»,

Крылова куçарма çăмăлах мар ĕнтĕ. Унăн «идиомсемпе, руссизмсемпе шутсăр пуян» чĕлхине, «çав тери оригиналла вырăс образĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене» урăх чĕлхепе пама çукки çинчен Белинский те каланă. Шавлы çав йывăрлăхсенчен хăраса тăманни аван.

Крыловăн халăх чĕлхине кĕнĕ «çунатлă сăмахĕсенех» вăл чылай баснйăсенче килĕшÿллĕ пама пултарни хавасланмалла: пире («Тирÿ сан урăх, чăн-чăнах, анчах чуну ав çав-çавах», «вăйли ялан вăйсăррине айăплать», «эп шурă ак, а эс кăвак» т. ыт. те).

Унăн рифмисем вăйлă, усă та янравлă, ритмики хăватлă, яка туптаннă стихсем нумай.

Пĕтĕмĕшпе илсен, кĕнеке начар мар, вулакансем ăна пысăк хавасланпа йышăнасси курăнсах тăрать.

Кĕнекене пĕтĕмпе 41 басня кĕнĕ. Çакă пире савăнтарать, анчах пысăкрах кăларма та май пулнĕ. Аван куçарнă баснйăсем пирĕн татах пур: «Ĕçлекенсен сасси» журналăн 1924 çулта тухнă 4, 5, 9-мĕш номерĕсенче пичетленнисенчен пĕр тăваттăшне тата Чăвашиздат кăларакан хрестоматисенче тухнă «Хресченпе тарçи» ятлине кĕртме юранă. Крылова куçарма ытти поэтсене хутшăнтарман.

Шанатпăр, хăйĕн хура вăйне аслă совет халăхĕн вĕçĕмсĕр вăйĕпе танлаштарасшăн мекĕрленекен Шапа-Гитлер латах çуралса пĕтнĕ хыççăн, пулас саманара, пĕтĕм тĕнче поэчĕн баснисене чăвашла пурне те куçарса кăларнă кĕнеке те курăпăр-ха.

Иван МУЧИ.

НТ 00003. Типографи № 1, Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. ф. 6. 59×42 и. л. Тираж 16.000 экз.